# Н. Я. БИЧУРИН

## ÇУРАЛНĂРАНПА 175 ÇУЛ ÇИТНĔ МАЙ

XIX-мĕш ĕмĕртн чаплă синолог-китаевед Никита Яковлевич Бичурин ĕлĕк Шупашкар уездне кĕнĕ Шĕнерпуç ялĕнче 1777 çулта çуралнă. Унăн ашшĕ чăваш пулнă. Тăхăр çула çитсен, Никита Сĕве хулинче вĕренме пуçлать, каярахпа ăна Хусанти духовнăй семинарине куçараççĕ. Çупта ăна хăйсен ялĕ ячĕпе (Шĕнерпуçне вырăсла Бичурино тенĕ) «Бичуринский» хушамат панă. Каярахпа вăл хăйĕн хушаматне кĕскетсе Бичурин туса хунă.

1807 çулта Бичурина, Пекинри духовнăй мисси начальникĕ тата Сретенски монастырĕн архимандричĕ туса, Китая яраççĕ. Унта вăл 1822 çулччен, 13 çул хушши, пурăнать, китай, монголпа тибет чĕлхисене лайăх вĕренсе çитет. Китайра Бичурин 270 томран тăракан Китай историне, 18 том статистикăллă документсем, 20 том энциклопедисем, 6 том пысăк словарьсем тата ытти нумай тĕрлĕ кĕнекесем питĕ нумай вуласа тухнă. Вăлах Пекинра китайпа вырăс сăмахĕсен 19 пайлă, 12 пин сăмахлă словарьне тунă, Маньчжурипе Китай çыннисен 4 томлă словарьне, вырăспа китай сăмахĕсен словарьне çырса хатĕрленĕ. Бичурин питĕ нумай кĕнекесене китай чĕлхинчен вырăсла куçарнă. Вĕсенчен чи паллă — «История Китая и полная география всех земель, подвластных этой империи» ятлă кĕнеке. Пĕр çулталăк хушши вăл Пекин хулин планне тăвас тĕлĕшпе ĕçленĕ, унтан «Описание Пекина с китайского подлинника 1818 г. и план города» ятлă кĕнеке çырнă. Вăл Китай, Маньчжури, Монголи, Тибет, Туркестан çыннисен тумĕсене те ÿкерсе илнĕ. Унăн произведенийĕсем Китай историне тĕпчесе вĕренес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăннă.

Бичурин Российăна 1822 çулта таврăннă. 1827 çулта ăна ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин Ази департаментĕнче китай чĕлхин тăлмачĕ туса хураççĕ. 1829 çулта ăна Росси Академийĕн член-корреспонденчĕне суйлаççĕ.

Çирĕм çула яхăн ĕçлесе, Бичурин 16 пысăк монографи, нумай тĕрлĕ брошюрăсем, статьясем çырнă, вăл тĕнчипе паллă ученăйсен ретне тăнă. 1851 çулта пичетленсе тухнă «Собрание сведений о народах, обитавших в Средней Азии в древние времена» ятлă кĕнекешĕн Бичурин Демидов премине илнĕ.



Бичуринăн ĕçĕсенче, пысăк çитĕнÿсемпе пĕрлех, çитменлĕхсем те пулнă: словарьсем хатĕрленĕ чухнехи хăшпĕр йăнăшсем, Китайра тупнă материалсене ытлашши шанни т. ыт. те. Анчах Бичуринăн ĕçĕсем, вĕсенче çитменлĕхсем пур пулин те, хальхи вăхăтра та пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ, мĕншĕн тесен аслă ученăй хăйĕн ĕçне буржуаллă ученăйсем пек капитал интересĕсемшĕн туман, вăл Китай халăхĕн пысăк культури çине, ĕçченлĕхĕпе пултарулăхĕ çине ăшă кăмăлпа, юратса пăхнă, вĕсене тĕрĕс çутатса панă. Бичурин Китайра пулса иртекен пур событисемпе те интересленнĕ.

XIX-мĕш ĕмĕрĕн малтанхи çурринче Англи Инçет-Хĕвел тухăçĕнче колонисем туртса илессишĕн вăрçăсем пуçласа янă. Бичурин çав вăрçăсене хирĕçлесе статьясем çырнă, вăл пĕтĕмпех Китай çыннисем майлă пулнă, вĕсене хÿтĕленĕ.

Бичурин вырăссен паллă çыннисемпе — писательсемпе, композиторсемпе, художниксемпе паллашнă. Уйрăмах вăл А. С. Пушкинпа, И. А. Крыловпа тачă çыхăну тытнă. Бичурин статьисене «Северные цветы», «Русский вестник», «Сын отечества», «Отечественные записки», «Московский телеграф», «Москвитянин», «Современник» ятлă журналсемпе альманахсем пичетленĕ. Пушкин Бичурин çырнă кĕнекесене юратса вуланă. Çав кĕнекесене Бичурин аслă поэта хăй парнеленĕ пулнă.

Бичурин хăшпĕр декабристсемпе çыхăну тытни çинчен калакан документсем те пур. 1831—1833-мĕш, 1836—1837-мĕш çулсенче вăл Çĕпĕрте Бестужевпа тата ытти декабристсемпе паллашать. Бестужев ун сăнне ÿкерсе илнĕ.

Бичурин 1800 çулта манаха тухать те ăна Иакинф ят параççĕ. Манах тумне вăл пĕрре те юратман, ăна хывса пăрахса, вăл ирĕке тухасшăн пулнă, анчах патша правительстви унпа килĕшмен: аслă ученăй хăйĕн ĕмĕрне манах тумтирĕпех пурăнса ирттернĕ.

Бичурин ячĕ совет çыннисемшĕн кăна мар, Китай халăхĕшĕн те çывăх ят пулса тăрать. Паттăр Китай халăхĕ, историллĕ çĕнтерÿ туса, çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тухрĕ. Çак çĕнтерÿ Китайпа Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхне татах та ытларах çирĕплетрĕ, çав туслăх малашне те тĕрекленсех пырĕ. Икĕ аслă çĕршыв хушшинчи туслă çыхăнусене аталантарас енĕпе хăй вăхăтĕнче Бичурин та питĕ тăрăшнă.